27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 13 ЫТЛАРИКУН 116(6611) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ГОВОРОВА

Енер, июнӗн 10-мӗшӗнче, ЛЕНИНГРАД фрончӗн çарӗсем Карели перешейкӗнче, ЛЕНИНГРАД хулинчен çурçӗртерехре наступлени пуçласа янă, авиацин артиллерин йышлă пыра-пыра çапса пулăшнипе, врагăн питӗ вăйлă оборонине татнă, икӗ кунти наступленире 24 километр таран малалла кайнă, вăйлă 40 километр таран сарнă.

Наступлени туса, фронт çарӗсем ТЕРИЙОКИ хулипе пысăк чугун çул станцине, тăшман оборонин ЯППИЛЯ ятлă паха опорнăй пунктне туртса илнӗ тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă.

Тăшман оборонине татассишӗн пынă çапăçусенче ГУСЕВ генерал-лейтенантăн, СИМОНЯК генерал-лейтенантăн, АЛФЕРОВ генерал-лейтенантăн, БУСАРОВ генерал-майорăн, ЩЕГЛОВ генерал-майорăн, ПУТИЛОВ генерал-майорăн, ЯКУШЕВ генерал-майорăн, ЯСТРЕБОВ генерал-майорăн, ТРУШКИН генерал-майорăн çарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн ОДИНЦОВАН, артиллери генерал-майорӗн МИХАЛКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ЖДАНОВАН, артиллери генерал-майорӗн ВАСИЛЬЕВАН, генерал-майорӗн СОЛОВЬЕВАН, ИВАНОВ полковникăн, КОРОЧКИН полковникăн артиллеристӗсем; танксен çарӗсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВАН, ШПИЛЛЕР полковникăн, КРАСНОШТАН подполковникăн, ПРИМАЧЕНКО майорăн, ОЛЕЙНИКОВ майорăн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн РЫБАЛЬЧЕНКОН, авиаци генерал-майорӗн АНДРЕЕВАН, авиаци генерал-майорӗн ЩЕРБАКОВАН, СКОК полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ГРЕСЬКОВ полковникăн летчикӗсем тата инженери çарӗсен генерал-майорӗн БЫЧЕВСКИН, ШУБИН полковникăн, РУЙ полковникăн сапёрӗсем чапа тухнă.

Тунă çӗнтерӗве палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă чаçсемпе соединенисене «ЛЕНИНГРАДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăламалла тунă.

Паян, июнӗн 11-мӗшӗнче, 23 сехетре, пирӗн Тăван çӗршыв столици МУСКАВ, вӗçре çирӗм тăватă тупăпа çирӗм хăрăс пере, тăшман оборонине татнă ЛЕНИНГРАД фрончӗн паттăр çарӗсене Тăван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, финсен оборонине татассишӗн пынă çапăçусене хутшăннă пӗтӗм çарсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хăмăр Тăван çӗршывăн ирӗклӗхӗшӗн çапăçусенче вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр чыс!

Нимӗç-финсен захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнӗн 11-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнӗн 10-мӗшӗнче фронтсенче палăрлă улшăнусем пулман.

Июнӗн 9-мӗшӗнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ӳкернӗ.

ИЮНӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Енер, июнӗн 10-мӗшӗнче, ЛЕНИНГРАД фрончӗн çарӗсем Карели перешейкӗнче, ЛЕНИНГРАДРАН çурçӗртерехре, наступлени пуçласа янă, авиаци артиллери йышлă пыра-пыра çапса пулăшнипе, врагăн питӗ вăйлă оборонине татнă, икӗ кунти наступленире 24 километр таран малалла кайнă. Наступлени туса, фронт çарӗсем ТЕРИЙОКИ хулипе пысăк чугун çул станцине, тăшман оборонин ЯППИЛЯ ятлă паха опорнăй пунктне туртса илнӗ тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă. Вӗсен шутра — КАМЕШКИ, СТАРАЙ БЕЛООСТРОВ, АЛЕКСАНДРОВКА, РАЙЙОКИ, НАЛЛЕЛОВО, СТАРЫЙ АЛАНУЛЬ, НОВЫЙ АЛАНУЛЬ, КУОККАЛА, ХИРЕЛЯ, НАРВАЛА, ИСУТСЕЛЬНЯ, ХАПАЛА, КЕЛЛОМЯКИ, ПУХТОЛА ятлă пысăк салисем, ТЕРЕ РАЙЙОКИ, ОЛЛИЛА, КУОККАЛА, КЕЛЬЗОМЯКИ ятлă чугун çул станцийӗсем те пур.

Фронтăн ытти участокӗсенче июнӗн 11-мӗшӗнче палăрлă улшăнусем пулман.

Июнӗн 10-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Карели перешейкӗнче, Ленинградран çурçӗртерехре, пирӗн çарсем наступлени пуçласа янă. Совет артиллерийӗсемпе авиаци тăшман сооруженийӗсене виçӗ сехет хушши пыра-пыра персе тăнă. Пӗр участокра 270 дзотпа тата бетонран тунă блиндажсене пӗтерсе тăкнă. Вут-çулăм хыççăн пехотăпа танксем атакăна хăпарнă. Хăвăртлăн пырса çапса, пирӗн çарсем тăшманăн вăйлă çирӗплетнӗ оборонине татнă. Тăшмана çӗмӗрсе, пирӗн çарсем ăнăçлăн малалла кусса пыраççӗ. Пӗр соединени чаçӗсем пӗр чарăнмасăр Сестра шывӗ урлă каçнă та, Терийоки хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнӗ. Пирӗн çарсем халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă. Тăшман çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем тӳснӗ. Траншейсенче, окопсенче тата блиндажсенче тăшман салтакӗсен темиçе пин виллийӗ выртса юлнă. Вӗсем пирӗн авиаци пăрахнă бомбăсенчен тата артиллери снарячӗсенчен вилнӗ. Трофейăсем нумай тытса илнӗ. Тыткăна илнисем пур. Хӗрлӗ Ялавлă Балтика флотӗн карапӗсем, тупăсемпе персе, наступлени тăвакан çарсене пулăшса пыраççӗ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хӗвелтухăç енерехре пирӗн разведка отрячӗсем шыв урлă каçнă та тăшмана атакăланă. Тăшман артиллерийӗпе пехоти вăйлă персе тăнă. Анчах та разведчиксем пӗр яла вăркăнса кӗнӗ те урамра пулса иртнӗ хаяр çапăçу хыççăн çав яла туртса илнӗ. Гитлеровецсене пӗр рота ытла пӗтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнӗ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хӗвелтухăç енерехре нимӗçсем Анисимов кӗçӗн лейтенантăн боевой охраненире тăнă взводне атакăланă. Артиллери вăйлăн персе тăнă хыççăн гитлеровецсем пирӗн тран[illegible] Пирӗн боецсем 20 нимӗçе [illegible] тăшмана каялла хăваласа янă. [illegible] 5 автоматчика çирӗплетсе кайнă.

* * *

Нимӗçсен 5-мӗш истребительнăй эскадрин 3-мӗш группин 7-мӗш отрядӗнчи тыткăна илнӗ летчик Артур Бет фельдфебель çапла каласа кăтартнă: «Хăй пӗлнӗ тăрăх, июнӗн 7-мӗш отрядри летчиксем — [illegible] лейтенант тата Курт Филипп, Вернер Штраубе унтер-офицерсем хăйсен самолечӗсемпе вӗçсе кайнă та каялла таврăнман. [illegible] пулнă полковник Холле тата Герингăн хăйӗн представителӗ пӗрле тӗрӗслерӗç. Нимӗçсен авиацийӗ Хӗвелтухăç фронтӗнче питех те пысăк çухатусем тӳсрӗ. Виççӗмӗш группа çулталăк хушшинче 90 самолет ытла çухатрӗ. Çакă вăл ăна виçӗ хутчен пуçӗпех пӗтерсе тăкнине пӗлтерет. Çар ушкăнӗсенче летчиксем çитменни çинчен калаçаççӗ. Летчиксен шкулӗсенче вӗренсе тухакансем вăрçăра вилекен летчиксенчен сахалтарах пулнă. Палăрнă хыççăн летчиксене урăх майсемпе кӗске вăхăтра хатӗрлеме тытăнчӗç. Çавах та летчиксем çитмеççӗ. Çавăн пирки ĕнтӗ авиаци чаçӗсене пополнени шучӗпе ефрейторсене яма пуçланă, ефрейторсем вӗсем — çара хальтерех çӗç пынăскерсем. Ӗлӗк ефрейторсем истребительнăй авиаци пилочӗсем пулма пултарайман. Халӗ çав йӗркене пăрахăçа кăларнă. Нумаях пулмасть пирӗн аэродрома «Норд» ятлă сывлăш флочӗн командующийӗ авиаци генералӗ Шульц пăхса тухрӗ. Летчиксемпе калаçнă чухне вăл çапла каларӗ: Германи йывăр кризис тӳсет терӗ. Унăн сăмахӗсем пире хуйха ячӗç».

Чăваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗнче

Вылăх-чӗрлӗхе хӗл каçармашкăн апат тата çуртйӗр хатӗрлесе хурасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ райисполкомсен председателӗсене, ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене, колхозсен председателӗсене тата пуçламӑш парторганизацисен секретарӗсене çакна асăрхаттараççӗ: вылăх апачӗ хатӗрлесси вăл вылăх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планӗн уйрăлми пайӗ пулса тăрать; Хӗрлӗ Çарпа халăха вылăх-чӗрлӗх продукчӗсем пӗр чарăнмасăр парса тăрасси тата Хӗрлӗ Çар валли утă çителӗклӗ парса тăрасси вылăх апачӗ хатӗрлемелли плана ăнăçлă пурнăçланинчен килет.

Анчах нумай райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсем тата колхозсем пӗлтӗр вылăх апачӗ хатӗрлес ыйту çине çителӗклӗ çавăрăнса пăхман, çавăн пирки чылай колхозсенче хӗл валли вылăх апачӗ çителӗклӗ хатӗрлесе хуман.

Сӗмӗрле районӗнче 1943 çулта 566 гектар улăха çулмасăр хăварнă. Пăрачкав, Куславкино тата Шăмăршă районӗсенчи хăшпӗр колхозсенче питӗ лайăх улăхсем çулăнмасăр юлнă, çавăнпа çав районсенчи колхозсенче иртнӗ хӗлле вылăх апачӗ çителӗклӗ пулман, çавăн пирки те вара унта вылăх-чӗрлӗх нумай вилнӗ.

Силос чи сӗтеклӗ апатсенчен пӗри пулса тăрать, вăл вылăх-чӗрлӗх тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Анчах республикăри чылай колхозсенче силоса халӗ те çителӗклӗ хак памаççӗ-ха. Калинино, Шупашкар, Советски районсенче тата ыттисенче те пӗлтӗр силос хывни çинчен суя сведенисем тăратса, государствăна улталанисем пулнă. Районри организацисем, силос хывнине ӳстерсе кăтартакан суя сведенисене ӗненсе, колхозсен уйрăм председателӗсен çав киревсӗр ӗçӗсене пулăшса тăнă, колхозсенчи вылăх-чӗрлӗхе сӗтеклӗ апатсăр тăратса хăварнă.

Вылăх-чӗрлӗх хисепне сыхласа хăварас тата вылăх апатне тирпейлӗн перекетлес ӗçре вылăх-чӗрлӗх валли лайăх витесем туса хатӗрлени те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Нумай колхозсенче вылăх-чӗрлӗх витисене юсамалла пулать. Пӗлтӗр темиçе районăн руководителӗсемпе колхоз председателӗсем вылăх-чӗрлӗх валли лайăх витесем хатӗрлесе курас ӗç çине çиелтен пăхнă. Çавăн пирки те вара вылăх-чӗрлӗхсен хисепӗ чакнă, пуринчен ытла çамрăк вылăхсем чылай вилнӗ.

Чăваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ çапла йышăннă:

1. Райисполкомсен председателӗсене, ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене тата колхозсен председателӗсене пӗлтӗр тунă йăнăша астутарас. Вăл йăнăш — утă çулса пухас, силос хывас тата вылăхсене хӗл каçарма витесем вăхăтра хатӗрлес ӗçе вăрăма яни пулнă.

Совет, парти тата комсомол организацийӗсене утă çулса пухассипе силос хывасси тырă пухса кӗртес ӗçпе танах паха ӗçсем пулса тăнине астутарас.

2. Колхозсем, совхозсем, çӗрӗç органӗсем, райисполкомсем тата ВКП(б) райкомӗсем умне çакăн пек задача лартас: вӗсен утă çулса пухас, силос хывас тата хӗл валли витесем хатӗрлес ӗçсене тыра вырма тухиччен, анчах та июлӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасăр вӗçлес пулать. Çак задачăна пурнăçламашкăн вӗсене çак ӗçсене тума хушас:

1. УТĂ ÇУЛСА ПУХАС ТĔЛĔШПЕ

1. Сенокосилкăсене, лобогрейкăсене çавасене, кӗреплесене тата утă пухмалли ытти инвентаре юсаса хатӗрлес ӗçе халех организацилемелле.

2. Утă çулса пухакан бригадăсемпе звеносем тумалла, вӗсене уйрăм участоксем уйăрса памалла, кунне мӗн чухлӗ çулмаллине тата миçе капан тумаллине кăтартса памалла.

Июнӗн 20-мӗшӗччен кашни колхозрах утă çулса пухас тӗлӗшпе (утта капана хывас тӗлӗшпе те) ӗç планӗпе графикне туса хатӗрлемелле.

3. Утă çулса пухас ӗçре кашнине уйрăм сдельщина йӗркипе тата ӗçпӗн хушса тӳлес йӗркепе тӳлемелле. Çав йӗрке тăрăх, утă çулса пухакан колхозниксене, ӗçкунӗсем тăрăх кӳлекӗсĕр пуçне, çулса капана хывнă уттăн вуннăмӗш пайне памалла, лаша сенокосилкисемпе ӗçлекен колхозниксене тыра вырма тухиччен 40 гектартан ирттерсе çулнă кашни гектар пуçне 20-шер килограмм утă памалла.

Утă çулса пухнăшăн памалли уттăн хисепне колхозниксем çине ăна капана хывса йышăннăçемӗн çырса пымалла, ăна çулса пухнă утта бригадирсем висçе пăхнă тăрăх шутласа çырмалла.

Бригадăри е звенори колхозниксене памалли утта вӗсене утă çулса пухнă чух тунă ӗçкунӗсен хисепӗ тăрăх валеçсе памалла.

Колхозниксене памалли утта утă çулса пухнă хыççăн, анчах та сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасăр памалла.

Колхозсен хăйсен вылăхӗсем валли утă çителӗклӗ пулмасан, çавăн пек колхозсене утă çулса пухнă колхозниксене утă вырăнне ытти тӗрлӗ çимӗçсемпе продуктсем пама сӗнес.

Утă çулса пухакан колхозниксене ӗç вăхăтӗнче пӗрле апатлантармалла.

4. Пăрса йышши курăксене тата тӗрлӗ курăксене чечеке ларма пуçланă вăхăтра, пучахлă курăксене — пучах кăларнă вăхăтра массăллăн çулмалла.

Кашни çавăрлана сысна ами валли 3—5 центнерçи лайăх йышши утă (пуринчен ытла клевер, люцерна утти) хатӗрлес тесе, пучахлă курăксене пучах кăлариччен, пăрса йышши курăксене — чечекленме тытăниччен çулмалла.

Пăрусем, путексем тата ытти йышши çамрăк вылăхсем валли витаминлă утă хатӗрлемешкӗн курăксене халех çулмалла.

Кăçал шыв илнӗ улăхсенче курăксене пур çӗрте те иккӗмӗш хут çулмалла.

5. Усранă чухне утта ан çăратчăр тата вăл ан пăсăлтăр тесе, колхоз правленийӗсемпе совхоз директорӗсене утта типсе çитсен çеç капана хывма хушас; утта çулса пухнă хыççăнах ăна колхоз правленийӗсен тайтарса е матрпа висçе йышăнмалла; утă хӗл каçма юрăхлă пултăр, ăна актсем тăрăх йышăнмалла, актсенче вара уттăн йывăрӗшне, пахалăхне тата ăна капана мӗнле хывнине кăтартмалла.

Утта ферма заведующийӗсене париччен уншăн колхоз председателӗсемпе кладовщикӗсем ответлă пулса тăраççӗ. Пысăк колхозсен правленийӗсене çав кладовщиксене пулăшмашкăн фуражирсем уйăрса хума сӗнес.

6. Чăваш АССР Наркомземне Пăрачкав, Куславкино тата Улатăр МТС-ӗсем çумӗнче утта машинăсемпе çулмалли отрядсем тума хушас, вӗсене июнӗн 20-мӗшӗччен туса пӗтермелле тата вӗсене утă çулмалли план туса памалла.

7. Райисполкомсене улăх çуке колхозсене утă çулмашкăн улăх ытлашши пур колхозсен улăхӗсенчен лаптăксем уйăрса пама хушас, çак ӗçе июнӗн 20-мӗшӗччен тумалла.

Государствăна вара вылăх-чӗрлӗх продукчӗсемпе утă çав лаптăксенчи утта çулса илнӗ колхозсем параççӗ.

8. Райсоветсен исполкомӗсене, ВКП(б) райкомӗсене тата колхозсен председателӗсене государствăна утă вăхăтра пама хушас, утта хатӗрлев пунктӗсене улăхран тӳрех турттарма тытăнмалла. Çак ӗçре майракаллă шултăра вылăхсемпе усă курмалла. Государствăна утă августăн 1-мӗшӗччен парса татмалла.

II. СИЛОС ХЫВАС ТĔЛĔШПЕ

1. Кăçал силос хывмалли курăксем çителӗклӗ пулнине шута илсе, вылăхсем валли сӗтеклӗ апатсем кирлӗ таранах хатӗрлемешкӗн кăçал силос хывмалли плана тултармалла çеç мар, ăна нумай ирттерсе тултармалла.

2. Июнӗн 20-мӗшӗччен силос хывмалли шăтăксемпе башньăсене инвентаризацилемелле, çавăн пекех тата вӗсене юсамалла тата Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗ 1944 çулхи апрелӗн 26-мӗшӗнче çирӗплетнӗ план тăрăх силос хывмалли çӗнӗ шăтăксемпе башньăсем тумалла. Вӗсене июлӗн 1-мӗшӗччен туса пӗтермелле.

3. Силос тата улăм касакан машинăсене, çавăн пекех тата силос хывма кирлӗ ытти инвентаре юсаса хумалла, вӗсем валли ӗç графикӗ туса хумалла.

4. Колхозсенче силос хывмашкăн иртнӗ çулсенче силос хывнă опытлă çынсене уйăрса хумалла. Силос хывма лайăх пӗлекен çынсем çук пулсан, ун пек колхозсен председателӗсен, райçӗрӗç пайӗпе килӗштерсе, хăйсен колхозникӗсене силос хывма вӗренме ытти колхозсене ямалла.

Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗпе райçӗрӗç пайӗсен июнӗн 20-мӗшӗччен мӗнпур районсенче силос хывма вӗрентмелли кӗске срокла семинарсем туса ирттермелле.

Колхозсенче силоса фермăсен заведующийӗсем кăтартса ертсе пынă тăрăх хывмалла.

5. Мӗнпур колхозсенче силос хывмалли график тумалла. Силос хывмалли плана пӗтӗмпех пурнăçа кӗртес тата силоса ирттерех хывса хăварас тесе, тыра вырма тухиччен хăйсем тӗллӗн ӳсекен курăксемпе анлăн усă курмалла. Малашне вара силос хывмашкăн силос хывмалли культурăсемпе, пахча-çимӗç юлашкийӗсемпе, çавăн пекех тата нумай çулсем хушши ӳсекен курăксемпе, улăхсенчи каюпа усă курмалла.

6. Силоса сыхласа усрас тата шута илес ӗçре йӗрке пултăр тесе, райçӗрӗç пайне тата колхозсен председателӗсене силос шăтăкӗсемпе башнисене йышăнма, вӗсен калăпăшне пӗлме тата силос хывас тӗлӗшпе тунă мӗнпур ӗçсене йышăнма комиссисем тума хушас, çав комиссисенче колхоз председателӗ, участок зоотехникӗ тата ферма заведующийӗ пулмалла. Çав комиссин ӗçе йышăнни çинчен акт çырнă хыççăн силос хывнă тӗле хăйне уйрăм юпа лартмалла, ун çине вара силоса хăçан хывнине, силос хывнă курăксен пахалăхне тата силос мӗн чухлӗ хывнине кăтартса çырса хумалла.

7. Силос хывнă çӗрте ӗçлекен колхозниксене хавасланттармашкăн вӗсене, ӗçкунӗсем çырса хунисӗр пуçне, шăтăксемпе траншейсене тата башньăсене силос тултарнă хыççăн силос хывнă çӗрте тунă кашни ӗçкунӗ пуçне 10-шар килограмм таран сӗлӗ памалла.

III. УРАХ ЙЫШШИ ВЫЛЬĂХ АПАЧӖ ХАТӖРЛЕС ТĔЛĔШПЕ

1. Райçӗрӗç пайӗсене тата колхозсен председателӗсене халех вӗлтрен, арӗм, çулçăллă турачсем тата ытти йышши апатсем хатӗрлеме хушас, вӗсене Совнаркомăн 1944 çулхи апрелӗн 21-мӗшӗнчи постановленийӗнче кăтартнă чухлӗ хатӗрлемелле.

2. Фермăсем çумӗнчи участоксенче вылăх апачӗ валли акнă культурăсене пурне те актсем тăрăх вылăх-чӗрлӗх фермисене памалла, çав культурăсене пăхмашкăн вылăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре ӗçлекен работниксене çирӗплетсе хумалла. Вылăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре ӗçлекен работниксене фермăсем çумӗнчи участоксенче ӗçленӗшӗн ӗçкунӗсем çырса памалла тата планран ирттерсе туса илнӗ культурăсен виççӗ пайӗнчен пӗр пайне хăйсене памалла.

3. Вылăх апачӗ валли кирте акнă культурăсене лайăх пăхса тăмалла, вӗсен тухăçлăхӗ пысăк пултăр тесе тăрăшмалла.

Вылăх-чӗрлӗх фермисем сывăхӗнче тымар-çимӗçсемпе çӗрулми усрама тунă çуртйӗрсене юсамалла тата çӗнӗ çуртйӗрсем тумалла.

IV. ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ УСРАМАЛЛИ ÇУРТСЕМ ХАТĔРЛЕС ТĔЛĔШПЕ

1. Пур колхозсенче те вылăх-чӗрлӗх усрамалли çуртсене тӗрӗслесе тухмалла, колхозсен фермисенчи мӗнпур вылăхсем валли юрăхлă çуртйӗрсем — витесем, омшанниксем тата ыттисем те туса хумалла. Вылăх-чӗрлӗх усрамалли çуртсен стенисене, урайӗсене, маччисене, чӳречисене тата алăкӗсене юсамалла, ăшă ямалла мар тумалла, вылăх усрамалли çуртсене таканасем, кормушкăсем тата ыттисем те çителӗклӗ туса хумалла.

Вылăх усрамалли çуртсенче пуринче те мачча тумалла.

2. Кашни колхозрах вылăх усрамалли çуртсене хӗл валли хатӗрлемешкӗн (тасатмашкăн, дезинфекцилемешкӗн, юсамашкăн, ăшă тытмалла тумашкăн) колхозниксемпе вылăх-чӗрлӗх фермисенче ӗçлекен работниксенчен ремонт бригадисем тумалла, вӗсене çав ӗçсене тыра вырма тухиччен пӗтерме кирлӗ чухлӗ уйăрса хумалла.

3. Çамрăк вылăхсене пурне те сыхласа хăварас тесе, пăрусем валли, çавăн пекех тата сысна амисемпе пӗтӗ сурăхсем валли тата сысна çурисемпе путексем валли чи лайăх, типӗ, çутă çуртсем хатӗрлесе хумалла.

Колхоз фермисенчи çамрăк вылăхсене юрăхлă çуртсем çитмеççӗ тесе, колхозниксен картишӗсенче вырнаçтарма чармалла.

4. Кашни вылăх-чӗрлӗх фермине вылăх апачӗ хатӗрлемешкӗн хăйне уйрăм кухньăсем тумалла.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсен вылăх усрамалли çуртсене хӗл валли хатӗрленине тӗрӗслемешкӗн государство комиссийӗсем тумалла, çав çуртсене вара августăн 1-мӗшӗччен актсем тăрăх йышăнмалла.

* * *

Чăваш АССР-ӗн Наркомземне утă çулма тата силос хывма тытăннă вăхăтран пуçласа çав ӗçсем мӗнле пыни çинчен кашни пилӗк кунта пӗрре отчет тăратма хушас.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсене тата ВЛКСМ Обкомне çак постановление мӗнпур колхозсенче тата партипе комсомол организацийӗсенче сӳтсе явма хушас. Колхозсен вылăх-чӗрлӗхӗ валли апат çителӗклӗ хатӗрлессишӗн тата вылăх усрамалли çуртсене хӗл валли вăхăтра хатӗрлессишӗн колхозсем, вылăх-чӗрлӗх фермисем, бригадăсем тата колхозсенчи комсомол организацийӗсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарса ямалла.

МТС-ри коммунистсен примерӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнӗн 10-мӗшӗ. (Телефонпа). МТС-ри коммунистсем çуракинче, ырми-канми ӗçлесе, ытти тракторситсене пример парса пычӗç. МТС çураки планне 144,6 процент тултарчӗ. П. Владимиров, И. Карпов, Я. Белов коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем плана ирттерсе тултарчӗç. Старши тракторист В. Егоров планпа 42 гектар сухаламалла вырăнне 104 гектар сухаланă. Е. Иванова ертсе пыракан бригада плана 200 процент тултарса, 175 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Коммунист-трактористсен примерӗпе ӗçне курса, çураки вăхăтӗнче малта пыракан У. Николаева, А. Герасимов, А. Павлов, А. Антонова юлташсем партин ретне кӗчӗç.

МТС-ри коммунистсем халь çӗртме сухи тăваç, уборкăна хатӗрленес тӗлӗшпе тимлӗн ӗçлеççӗ. Паянхи куна МТС 8 комбайн юсанă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Чăваш АССР Совнаркомӗнче

АПАТ-ÇИМӖÇ КОМБИНАЧӖСЕН, ПРОМЫСЛА ТАТА ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙӖСЕН АРТЕЛӖСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВӖН 1944 ÇУЛХИ МАЙ УЙĂХӖНЧИ ИТОГӖСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомӗ апат-çимӗç промышленнойӗн районсенчи тата хуласенчи комбиначӗсен, промысла кооперацийӗпе инвалидсен кооперацийӗн артелӗсен социализмлă ăмăртăвӗн 1944 çулхи май уйăхӗнчи итогӗсене пăхса тухнă.

Районсемпе хуласенчи апат-çимӗç комбиначӗсен ăмăртăвӗнче мала тухнă Куславкинори апат-çимӗç комбиначӗ (директорӗ Т. Ф. Жоров юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Д. Г. Ларионов юлташ) Чăваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 6.000 тенкӗ укçа памалла тунă.

Май уйăхӗнче Сӗмӗрле, Канаш, Калинино, Вăрмар районӗсенчи тата Шупашкар хулинчи апат-çимӗç комбиначӗсем лайăх ӗçленине палăртнă.

Промысла кооперацин артелӗсен ăмăртăвӗнче Чăвашпромсоюз системине кӗрекен Улатăрти «Красный восход» артель (председателӗ Рутковский юлташ, Улатăр хула совет исполкомӗн председателӗ Вислобоков юлташ) мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Хӗстакассинчи «Лесоруб» артельтен илсе, «Красный восход» артеле памалла тунă. Ялавпа пӗрле ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкӗ укçа пама йышăннă.

Сӗнтӗрвăрри районӗнчи Хӗстакассинчи «Лесоруб» артеле ăмăртура палăрнă работниксене премилеме тата вӗсен пурнăçпа йăла условийӗсене лайăхлатма 4.000 тенкӗ, Шупашкарти «Пекарь» артеле 3.000 тенкӗ памалла тунă.

Май уйăхӗнче Канашри «Авангард», Сталин ячӗпе тăракан артельсем, Октябрьски районӗнчи Карачьялӗнчи «Труд», Сӗнтӗр районӗнчи «Дружба», Çӗрпӳ районӗнчи Апаккасинчи артельсем лайăх ӗçленине палăртнă.

Инвалидсен кооперациӗн артелӗсен ăмăртăвӗнче Шупашкарти «Чебторгин» артель (председателӗ Мицина юлташ, Шупашкар хула совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ) мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне «Чебторгин» артельтех хăвармалла тунă тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкӗ укçа панă.

Танксемпе самолетсем тума

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче

** Танксемпе самолетсем тума укçа пухасси хула совет работникӗсем хушшинче сарăлсах пырать. Общи отделта ӗçлекенсем 17 пин тенкӗ, социальнăй обеспечени отделӗнче ӗçлекенсем 1.700 тенкӗ пухнă.

** Чăлха фабрикин коллективӗ Хӗрлӗ Çар валли пӗр боевой танк тумашкăн укçа пухма йышăннă. Фабрика директорӗ Богуславская юлташ 3.000 тенкӗ, снабжени отделӗн начальникӗ Хмеленский юлташ 2.500 тенкӗ, главнăй инженер Черкалин 2.000 тенкӗ панă. Танк тума 30.000 тенкӗ ытла пухнă та ӗнтӗ.

Совет Союзӗпе Америка хушшинче килӗшӳ туни икӗ çул тултарнă ятпа СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халăх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ патӗнче ирхи апатлану пулнă

Совет Союзӗпе Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсем агрессие хирӗç вăрçас ӗçре пӗр-пӗрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен пӗр-пӗринпе килӗшӳ туни икӗ çул тултарнă ятпа июнӗн 10-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халăх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ патӗнче ирхи апатлану пулса иртнӗ. Апатлануре çаксем пулнă: США Посолӗ В. А. Гарриман господин, Великобритани Посолӗ А. К. Керр господин, США Çар Миссийӗн Пуçлăхӗ генерал-майор Д. Дин, США Çар Миссийӗн Арми Секцийӗн Начальникӗ бригаднăй генерал В. Крист, США Суту-илӳ Палатин Председателӗ Э. Джонстон господин, Великобритани Çар Миссийӗн Пуçлăхӗ генерал-лейтенант Б. Баррос, контр-адмирал Э. Арчер, çавăн пекех тата США Посольствин дипломати составӗ. Советсем енчен çак юлташсем пулнă: А. И. Микоян, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, адмирал Л. М. Галлер, А. Д. Крутиков, В. А. Сергеев, М. С. Степанов, авиаци генерал-полковникӗ А. В. Никитин тата СССР Наркоминделӗпе Наркомвнешторгӗн ответлă сотрудникӗсем.

В. М. Молотовпа Гарриман господин Совет Союзӗпе Америка хушшинчи килӗшӳ икӗ çул тултарнă ятпа пӗр-пӗрне саламласа кӗске сăмахсем каланă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобританирен тата Канадăран Совет Союзне хĕçпăшал, стратегиллĕ чĕртавар, промышленность оборудованийĕ тата апат-çимĕç парса тăни

Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕр пăвăрлă çĕршывсене хăвăртрах çапса аркатас пĕр пĕлĕ тĕллевпе Совет Союзĕпе пĕрлешнĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани, Совет Союзĕ çине фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсем тапăннăранпа, ССР Союзне хĕçпăшал, промышленность оборудованийĕ, материалсем тата апат-çимĕç парса тăма тытăннă. Çав пекех Канада та хутшăннă, вăл 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен ССР Союзне çар материалĕсем Англи шучĕпе парса тăнă, вăйран вара çав ĕçе хăй тĕллĕн туса пыма тытăннă. Совет Союзне çак асăннă пек материалсем парса тăрса, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани тата Канада пирĕн тăван çĕршыва фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларас, гитлерла Германие тата унăн тарçисене союзниксен çĕнтерĕвне хăвăртлатас ĕçре Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу туни.

Пĕрлешӳллĕ Штатсем — çар материалĕсене хĕçпăшала кивçен е арендăпа памалли закон (Ленд-Лиз закон) тăрăх, Великобритани — [illegible] тăрăх, пĕрре вăрçă материалĕсем, кивçен укçа-тенкĕ парса тăрасси çинчен тата тӳлемелли йĕрке çинчен 1941 çулхи августăн 16-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх, [illegible] 1942 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче тунă Килĕшӳ тăрăх, Канада — Канадăн Пĕрлешнĕ Нацисем пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калакан законĕ тăрăх парса тăрать.

Акăрракан Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани тата Канада Совет Союзне çар материалĕсемпе [illegible] парса тăни çинчен Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ пама даннăйсене пĕлтерет:

I. АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ХĔÇПĂШАЛА КИВÇЕН Е АРЕНДĂПА ПАМАЛЛИ ЗАКОН (ЛЕНД-ЛИЗ ЗАКОНĔ) ТĂРĂХ СОВЕТ СОЮЗНЕ 1941 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔНЧЕН 1944 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 30-МĔШĔ ХУШШИНЧЕ ПАНĂ ÇАР МАТЕРИАЛĔСЕМ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хĕçпăшала кивçен е арендăпа памалли закон (Ленд-Лиз закон) тăрăх 1941 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ çитиччен Совет Союзне [illegible] стратегиллĕ чĕртавар тата промышленность оборудованийĕ [illegible] миллион тонна, пĕтĕмпе 5.357 миллион долларлăх ăсатнă.

Ăсатнă материалсенчен Совет Союзне 7,4 миллион тонна материал, 4.612 миллион тенкĕлĕх çитнĕ, вăл шутран 1941—1942 çулсенче — 1,2 миллион тонна, 1943 çулта — 4,1 миллион тонна тата 1944 çулхи тăватă уйăх хушшинче — 2,1 миллион тонна. 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне çул çинче пароходсем çинче 68,4 пин тонна материал пулнă.

Çак вăхăт хушшинче Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Совет Союзне çакăн пек хĕçпăшалсемпе çар материалĕсене илсе килнĕ: самолетсем 6.430, [illegible] —2.442 самолет илнĕ, танксем — 3.734, мина тральщиксем — 10, подводнăй лодкăсене [illegible] охотниксем (судйăсем)—12, торпедо катерсемпе подводнăй лодкăсене [illegible] охотниксем — 82, автомашинăсем — 206.771, механизациленĕ çар транспорчĕсем [illegible] —5.397 единица, мотоциклсем—17.017, зенитлă тупăсем —3.168, «Эрликон» тупăсем — 1.111, снарядсем—22,4 миллион штук, патронсем—991,4 миллион штук, тар (порох)—87,9 пин тонна, толуол, тринитротолуол тата аммонит—130 пин тонна, [illegible] телефон провочĕ—1.229 пин километр [illegible], телефон аппарачĕсем—245 пин штук, çар ботинкисем—5,5 миллион мăшăр, [illegible]—22,8 миллион [illegible], [illegible]—2.073 пин штук.

Стратегиллĕ чĕртавар шутĕнчен çаксене илсе килнĕ: пысăк пахалăхлă авиаци бензинĕ (авиабензин тата изооктан) — 476 пин тонна, алюминипе дюр-алюмини —99 пин тонна, пăхăрпа пăхăртан тунă япаласем—184 пин тонна, цинк —42 пин тонна, никель—6,5 пин тонна, хурçă тата хурçăран тунă япаласем—1.160 пин тонна, вĕсенчен рельсăсемпе вĕсене сирĕплетмелли япаласем — 246 пин тонна.

Оборона промышленноçĕн пушмисем валли илсе килнĕ: металл касакан станоксем — 20.380 станок, промышленность тĕрлĕ оборудованийĕсем — 257,2 миллион долларлăх, вăл шутра энергетика оборудованийĕ — 288 пин киловатлăх, [illegible] — 39 пин [illegible], нефтьрен тĕрлĕ япала тăвакан заводсем валли [illegible] тата алюминирен прокат тăвакан завод валли [illegible] 4 завод валли [illegible] — 4.138 (вĕсен [illegible]), [illegible] — 1.768, [illegible] — 2.718, [illegible] — 524, [illegible] — 209, [illegible] — 241, [illegible] — 1.154, [illegible] — 80 штук.

Апат-çимĕç 2.199.000 тонна турттарса килнĕ.

II. ВЕЛИКОБРИТАНИ СОВЕТ СОЮЗНЕ 1941 ÇУЛХИ ИЮНĔН 22-МĔШĔНЧЕН ПУÇЛАСА 1944 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 30-МĔШĔНЧЕН ПАНĂ ÇАР МАТЕРИАЛĔСЕМ

Великобритани Совет Союзне 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ çитиччен стратегиллĕ чĕртавар тата промышленность оборудованийĕ 1.150 пин тонна ăсатнă. Вĕсенчен 319 пин тонна хĕçпăшала тӳлевсĕр, вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшас йĕркепе, ăсатнă; 815.000 тонна чĕртавара, промышленность оборудованийĕпе апат-çимĕçе (пĕтĕмпе 83,7 миллион кĕрепенке стерлинглăх) пĕр-пĕрне вăрçă материалĕсем, кивçен укçа-тенкĕ парса тăрасси çинчен тата тӳлемелли йĕрке çинчен 1941 çулхи августăн 16-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх ăсатнă (вĕсенчен пĕр пайне—кивçен, тепĕр пайне—укçан).

Нумаях мар грузсем (2000 тонна, пĕтĕмпе 0,5 миллион кĕрепенке стерлинглăх) вăрçă пуçланиччен укçан ăсатнă.

Ăсатнă грузсенчен Совет Союзне 1.041 пин тонна çитнĕ, вăл шутран 1941 çулта —158 пин тонна, 1942 çулта—375 пин тонна, 1943 çулта—364 пин тонна тата кăçалхи çулăн тăватă уйăхĕ хушшинче—144 пин тонна.

Кăçалхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне Совет Союзне килекен çул çинчи пароходсем çинче 44 пин тонна груз пулнă.

Великобританирен Совет Союзне çакăн пек чи пахă хĕçпăшалсемпе снаряжени илсе килнĕ: самолетсем—3.384, кунсăр [illegible] 548, снарядсем—17 миллион штук, патронсем — 290 миллион штук, тар—17,3 пин тонна, артиллерирен персе йĕркелемелли радиоустановкăсем—214, подводнăй лодкăсене тупса палăртмалли приборсем — 116.

Стратегиллĕ чĕртавар шутĕнчен çаксене илсе килнĕ: каучук — 103,5 пин тонна, алюмини — 35,4 пин тонна, пăхăр—33,4 пин тонна, çутă тăхлан — 29,4 пин тонна, хура тăхлан — 47,7 пин тонна, цинк—7,4 пин тонна, никель — 2,7 пин тонна, кобальт — 245 тонна.

Оборудованисенчен оборона промышленноçĕн пушшисем валли кирлĕ çакăн пек япаласем илсе килнĕ: металл касакан станоксем—6.491, ытти тĕрлĕ промышленность оборудованийĕсем — 14,4 миллион кĕрепенке стерлинглăх, вăл шутра: энергосиловой оборудовани — 374.000 киловатлăх, электромоторсем — 15.084, прессемпе мăлатуксем — 104, портсенче ĕçлемелли крансем—24, техникăллă алмазсем—1.206.000 кĕрепенке стерлинглăх.

Апат-çимĕçсем 138,2 пин тонна кӳрсе килнĕ.

III. КАНАДА СОВЕТ СОЮЗНЕ ПАНĂ ÇАР МАТЕРИАЛĔСЕМ

Вăрçă пуçланнăранпа 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен Канада Совет Союзне материалсем, ССР Союзĕпе Канада хушшинче 1942 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче кредит пирки тунă Килĕшӳ тăрăх, Великобритани обязательствисен шучĕпе парса тăнă. 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вара Канадăн «Пĕрлешнĕ Нацисем пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен» калакан законĕпе килĕшӳллĕн Канада Совет Союзне материалсем хăй тӳлĕн парса тăма тытăннă.

Материалсем тăратма пуçланăранпа кăçалхи апрелĕн 30-мĕшне çитиччен Канада Совет Союзне хĕçпăшалпа стратегиллĕ материалсем тата апат-çимĕç (тулăпа çăнăх) пĕтĕмпе, Канада долларĕсемпе шутласан, 187,6 миллион долларлăх ăсатнă. Çав хисепрен çакăн пек япаласем ăсатнă: Англи обязательствисем шучĕпе (1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен) 93.000 тонна, пурĕ, Канада долларĕсемпе шутласан, 116,6 миллион долларлăх, ССР Союзĕпе Канада хушшинче кредит пирки тунă Килĕшӳ тăрăх, Канада долларĕсемпе шутласан, 10 миллион долларлăх 182.000 тонна тулăпа çăнăх тата «Пĕрлешнĕ Нацисем пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен» калакан закон тăрăх — 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕпе 1944 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ хушшинче — Канада долларĕсемпе шутласан, 61 миллион долларлăх 175.000 тонна груз ăсатнă.

Канада ăсатнă грузсенчен Совет Союзне 355.000 тонна çитнĕ, вăл шутран: 1942 çулта — 125.000 тонна, 1943 çулта — 124.000 тонна, кăçалхи тăватă уйăх хушшинче — 106.000 тонна.

Канадăран Совет Союзне çакăн пек япаласем илсе килнĕ: танксем — 1.188, бронетранспортерсем — 842, грузовиксем —2.568, снарядсем — 827.000, патронсем — 34,8 миллион, тар—5.000 тонна, алюмини — 36,3 пин тонна, хура тăхлан—9,1 пин тонна, пăхăр — 23,5 пин тонна, цинк — 6,7 пин тонна, никель— 1.324 тонна, рельсăсем—13,3 пин тонна, тулăпа çăнăх — 208,6 пин тонна.

Кăçалхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне Канадăран Совет Союзне килекен çул çинче 60.000 тонна груз пулнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ТĂШМАНĂН РУМЫНИРИ ТАТА ЮГОСЛАВИРИ ВĂРÇĂ ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПĂННИ

Июнĕн 11-мĕшĕнче США сывлăш-çар вăйĕсен 15-мĕш авиаци корпусĕ тăшманăн Констанцăпа Джурджу хулисенчи (Румыни) тата Смедерово хулинчи (Югослави) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Çав тапăнăва американецсен совет территорийĕнчи базăсенче тăракан йывăр бомбардировщикĕсем те хутшăннă.

СССР территорийĕнчи аэродромсенчен вĕçсе кайнă самолетсене те шутласан, çав тапăнура пĕтĕмпе 1000 самолет ытла пулнă.

Летчиксем пĕлтернĕ тăрăх, тапăну ăнăçлă иртнĕ. Американецсен çак тапăнура пĕр самолет çухалнă. (ТАСС).

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: Англи бомбардировщикĕсем июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германие тата вăл оккупациленĕ территорисене тапăннă. «Москито» йышши самолетсен соединенийĕсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвеланăç Боснире çаплах фронтăн мĕнпур участокĕсенче те хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çав çапăçусенче нимĕç эсэсовецĕсен «Принц Эуген» ятлă дивизине уйрăмах пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин Словенире çапăçакан 7-мĕш корпусĕн командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, уйăх хушшинчи çапăçусенче, апрелĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа майăн 27-мĕшне çитиччен, çав корпус чаçĕсем нимĕçсене çакăн пек çухатусем кӳнĕ: 1000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ е амантнă; 8 танк, 8 бронемашина, 5 грузовик, 4 мотоцикл тата 2 тупă пĕтерсе тăкнă. 5 çар поездне ӳпĕнтерсе янă, пĕр самолет персе ӳкернĕ. 7-мĕш корпус çарĕсем тăшмантан бронемашина, пĕр мотоцикл, 10 пулемет, 24 миномет, 2 автомат, 200 винтовка, 150.000 патрон ытла тата обмундировани нумай тытса илнĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсене нумай опорнăй пунктсенчен çапса кăларнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ПЕСКАРА, СУЛЬМОНА ХУЛИСЕНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ нимĕçсен 14-мĕш армине хыçранах хăваласа пырать, Витербо, Тускания (Витерборан хĕвеланăçнерехре) тата Тарквиния хулисене (Чивита-Веккиаран çурçĕртерехре) туртса илнĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн çарĕсем тăшман арьергарчĕсемпе Тибр шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре çапăçаççĕ. Вĕсем Мориконе хулине (Римран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) тата Арсоли хулине (Римран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) туртса илнĕ. Адриатика секторĕнче союзниксен çарĕсем темиçе тĕлте Форо шывĕ урлă каçнă. Гуардиагреле хулипе Ореоля хулине туртса илнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем ĕнер Мюнхен районне çитнĕ, çавăн пекех тата тăшманăн Италири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Италин хĕвелтухăç çыранĕнче Пескара, Сульмона тата Кьети хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти пунктсене йышăннă.

Римран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пынă, Римран 95 километр çурçĕртерехри пункта çитнĕ. Ку районра союзниксен çарĕсем Кенино тата Монтальто-Ди-Кастро хулисене йышăннă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшман çарĕсене тата унăн вăрçă объекчĕсене тапăннă. Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем Плоешти хули çине, тăшманăн Югославипе Çурçĕр Албанири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çав операцисенче тăшманăн 27 самолетне пĕтерсе тăкнă. Ĕнер кăнтăрла çапăçусен районĕнче пĕр нимĕç самолечĕ те пулман.

ПАРТИЗАНСЕН ТРИБУНАЛĔСЕН ПРИГОВОРĔСЕМ

ЖЕНЕВА, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибюн де Женев» хаçат çапла пĕлтерет: Италири фашистсен влаçĕсем партизансен пĕчĕк ушкăнĕсен ĕçĕсенчен хытă хăраса ӳкнĕ. Çав ушкăнсем хуласемпе местечкăсене кĕреççĕ те, «партизансен трибуналĕсен решенийĕ тăрăх», халăха сутса тăракан предательсем пирки йышăннă приговорсене пурнăçа кĕртеççĕ. Хаçатра çапла çырнă: «Влаçсем темĕн пек тăрăшаççĕ пулин те, партизансен ĕçĕсем лăпланмаççĕ. Фашистсемпе нимĕçсем пирки йышăннă приговорсене пур çĕрте те пурнăçа кĕртсе тăраççĕ», — тет хаçат.

ИТАЛИ ÇАРНЕ ТАСАТНИ

АЛЖИР, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Дерньер Нувель» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Итали çар министерстви Итали çарне тасатма тытăннă. 29 генерала, 21 полковника, 368 старши офицера тата 9.496 кĕçĕн офицера вырăнтан кăларнă.

КĔСКЕН

1944 çулта, союзниксен çарĕсем анма тытăниччен француз патриочĕсем Францин нимĕçсем усă куракан чугун çулĕсем çинче 819 поезда ӳпĕнтерсе янă, чугун çула 563 тĕлте пăснă, 58 стрелкăна пĕтерсе тăкнă, 1.518 паровоза тата 4.932 товарнăй вагона юрăхсăра кăларнă, боеприпассем тиенĕ икĕ эшелона сирпĕнтерсе янă, 94 бензин цистернине вут тивертнĕ тата ытти те. Германи поезчĕсене тапăннă чухне 2.100 нимĕçе вĕлернĕ, 5.580 çынна амантнă.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

«Америка çарĕсем Изиньи хулине туртса илнĕ. Çанталăк начар тăнă пулин те, çĕр çине çĕнĕ вăйсемпе çар материалĕсем илсе пырса антарас ĕç чарăнман. Июнĕн 9-мĕшĕнче ирхине Англипе Канадăн пехотнăй тата танковăй çарĕсем тăшманăн хаяр атакисене сире-сире янă, Кан районĕнче çирĕп тытăнса тăнă. Пирĕн çарсем тăшманăн Кондэ-Сюр-Селль сывăхĕнчи йышлă вăйĕсемпе çапăçма тытăннă. Ытти секторсенче пĕр чарăнмасăр çапăçаççĕ.

Ĕнер çанталăк начар тăнă пирки пирĕн авиаци çапăçусем пыракан район çийĕнче хураллаcа çеç çӳренĕ, вăл тăшман авиацийĕн ĕçĕсене кансĕрлесе тăнă. Союзниксен шыв çинчи вăйĕсем пырса çапнине пула, тăшманăн пĕр эсминецĕ Брест сурутравĕ çинчи Бац сывăхĕнче сыран хĕррине тухса ларнă пулнă. Ăна кайран сывлăшран атакăланă та çав эсминецран вара мăкăрланакан кĕлетки çеç тăрса юлнă. Тăшманăн пĕр самолетне Ла-Маншăн хĕвеланăç пайĕнче хураллаcа çӳренĕ самолетсем Брестран 20 милльăра персе ӳкернĕ.

Июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировочнăй авиацин пысăк вăйĕсем тăшманăн Флерти, Деннри, Лавальти тата Ле-Мансри (çурçĕр-хĕвеланăç Францире) аэродромĕсене тата Парижран кăнтăртарахра ларакан Этемпри чугун çул узелне тапăннă. 8 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман. Çăмăл бомбардировщиксем тăшманăн çапăçу районĕ тулашĕнчи сыхăнăвĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Çанталăк çаплах начар тăнă. Çĕрле вĕçекен истребительсем десант антарнă вырăнсем тĕлĕнче тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн подводнăй лодкисем пире çапăçу пыракан районпа сыхăнма кансĕрлесшĕн; çав подводнăй лодкăсене хирĕç пыракан хăватлă наступленире сыранри оборона авиацийĕ шыв çинчи тинĕс-çар вăйĕсемпе килĕштерсе кĕрешет».

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ çарĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июнĕн 10-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

«Союзниксен çарĕсем укрепленисен пĕтĕм районĕнче малалла куçса пынă. Тревьер пирĕн алăра тăрать. Хĕвелтухăç секторта тăшманăн йышлă бронетанковăй вăйĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Котантен сурутравĕ çинче пирĕн малти патрульсем нумай тĕлте тĕп чугун çултан хĕвеланăçнерехре тăраççĕ. Карантан секторĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Июнĕн 10-мĕшĕнче ирхине çанталăк лайăхланнине пула, пирĕн çĕр çинчипе шыв çинчи вăйсене пулăшса тăракан авиаци çĕнĕрен вăйлă кĕрешме пуçланă. Йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Бретаньри тата Нормандири аэродромĕсене тапăннă. Вĕсене хӳтĕлесе пынă истребительсем çапăçу районĕнчех вĕçсе çӳренĕ, вĕсем тăшманăн танкĕсемпе транспорчĕсене тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ. Истребительсен ытти соединенийĕсем нумай тĕлте тăшман танкĕсемпе транспорчĕсене атакăланă. Пирĕн вăтам бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынă[illegible], тăшман çарĕсем тăракан вырăнĕсен хысĕнчи объектсене икĕ хутчен тапăннă. Çав объектсем хушшинче — автотранспортпа поездсем, пĕр çĕре пухăнса тăнă çарсемпе танксем, кĕперсем тата сыхăну центрĕсем. Пирĕн авиаци укрепленисен районĕнчи тата Ла-Манш çинчи операцисене хӳтĕлесе тăнă. Çапăçусене тăшман истребителĕсем нумай хутшăнман, анчах унăн зенитнăй артиллерийĕ нумай тĕлте вăйлă персе тăнă. Халь илнĕ хыпарсем тăрăх, тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, пирĕн 7 истребитель хăйсен базисене таврăнман.

Ирхине çĕнĕ çарсем илсе пырса антарнă. Союзниксен карапĕсем наступлени районĕн хĕвелтухăçпе хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешнĕ, вĕсем пирĕн çĕр çинчи çарсене пулăшса тăнă».

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

«Танксем пырса çапнине пула, Англи çарĕсем Тилли-Сюр-Селль хулине çитнĕ. Июнĕн 10-мĕшĕнче карапсен артиллерийĕ çав секторта союзниксен çарĕсене малалла куçма нумай пулăшнă. Унтан хĕвеланăçнерехре Америка çарĕсен малти чаçĕсем Ор шывĕн вăтам пайĕнчи улăхра шыв илтернĕ районран кăнтăралла куçнă. Изиньипе Карантан хушшинчи сăрта Америка çарĕсем йышăннă. Тăшман çарĕсем пĕр чарăнмасăр вăйлă атакăланă пулин те, вĕсем пирĕн Кан сывăхĕнчи çарсен районне татса кĕреймен. Карантанран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре эпир Мердере шывĕ урлă каçрăмăр, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçрăмăр.

Союзниксен авиацийĕ июнĕн 10-мĕшĕнче тата июнĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле чугун çулсемпе шоссе çулĕсене тата аэродромсене тапăннă. Кăнтăрла вĕçекен йывăр бомбардировщиксем аэродромсене тапăннă тата тăшманăн поезчĕсемпе вагонĕсене, кĕперĕсене, бронетанковăй колоннисене чылай пысăк сиен кӳнĕ. Тăшманăн 13 самолетне пĕтерсе тăкнă. Истребительсем шоссе çулĕсемпе чугун çулсене атакăланă, боеприпассем турттарса пыракан поезда пĕтерсе тăкнă. Çав операцисенчен 23 истребитель таврăнман. Вăтам бомбардировщиксем, хăш чухне 200 фут çӳллĕш çеç вĕçсе пырса, хирти артиллерин батарейисем çине тата бронетанковăй колоннăсем çине бомбăсем пăрахнă, тăшман хирĕç тăман. Фалез тата Сен-Ло районĕсене чылай пысăк сиен кӳнĕ. Истребитель-бомбардировщиксем тата истребительсем, аялтанах вĕçсе пырса, Лавальти тата Ле-Мансри чугун çул станцийĕсене атакăланă. Аврăншра самолетсем бронетанковăй колоннăпа поезд çине бомбăсем пăрахнă. Çав операцисенче тăшманăн 15 истрбительне пĕтерсе тăкнă.

Июнĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Орлеанри, Дре Ашерти тата Версальти чугун çул узелĕсене атакăланă. Тăшман авиацийĕ питĕ вăйлă хирĕç тăнă. Нимĕçсен 6 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 20 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман. Пирĕн çĕрле вĕçекен истребительсем вăйлă кĕрешеççĕ, вĕсем нимĕçсен 6 бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă. Çав бомбардировщиксенчен 5-ĕшне çапăçусем пыракан район тĕлĕнче пĕтерсе тăкнă».

Çурçĕр Францири операцисем

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Çар корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Изиньи хулипе Байе хули хушшинче пĕр тăтăш фронт пулса тăнă. Кан хулине хăйсен аллинчех хăварас тесе, нимĕçсем унта 3 бронетанковăй дивизи илсе пынă. Нимĕçсен радиовĕ çапла пĕлтернĕ: Англи çарĕсем Кан хулин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче çирĕпленсе тăраççĕ, унта вĕсем чугун çул станцине йышăннă, çав станцие вара опорнăй пункт туса хунă, тенĕ. Ĕнер кăнтăрла союзниксен çарĕсен ударлă ушкăнĕ Кан районĕнче нимĕçсем йышăнса тăракан çуллĕ вырăна атакăлама тытăннă. Нимĕçсен контратаки ăнăçлă пулман. Нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, союзниксем малалла куçса пыраççĕ.

Карантан хули районĕнче Америка çарĕсем анлă наступлени тума пуçланă. Нимĕçсен информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: Карантан хулипе Валонью хулисем хушшинче американецсен икĕ авиадесант дивизийĕ, 3 пехотнăй тата пĕр танковăй дивизийĕ çапăçаççĕ, ку дивизисенче йывăртан йывăр танксем нумай тата специальнăй чаçсем йышлă, вăл шутра — ударлă инженери бригади. Çак группировкăна Шербур крепоçне штурмласа илме приказ панă. Карантан хулинчен çурçĕртерехри укрепленире Америка çарĕсем союзниксен Изиньи районĕнче кĕрешекен чаçĕсемпе пĕрлешнĕ.

Юлашки хыпарсем тăрăх, Америка çарĕсем паян Гранкан хулине туртса илнĕ. Вăл Изиньи хулинчен 6 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларать.

Тилли-Сюр-Селль хулине туртса илнĕ хыççăн союзниксен плацдармĕ 21 километр шалалла кĕрсе кайнă, унăн сарлакăшĕ халь 82 километр. Çак плацдармăн чи сарлака вырăнĕ — Тилли-Сюр-Селль, вăл сырантан 21 километр шаларах ларать.

Çарсем анса ларнă районра çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хăшпĕр участоксенче позицисем аларан алла куçаççĕ. Анчах та союзниксен çарĕсем малаллах куçса пыраççĕ. Снаряжени антарса тăрас ĕç ăнăçлă пырать. Çанталăк авиаци ĕçĕсене кăштах кансĕрлет.

«Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: нимĕçсен линийĕсем хыçне чи малтан анса ларнă акăлчансен парашют чаçĕ питĕ сасартăк çапăçма тытăннă. Хăшпĕр çĕрте нимĕç офицерĕсем вырăнсем çинчен те тăма ĕлкĕреймен, вĕсене çавăнтах ярса илнĕ. Каярахпа, нимĕç танкĕсемпе мотопехоти наступление кĕрсе кайсан, союзниксем хăйсен подкреплениĕсене тӳрех çапăçусен районне антарса тăнă.

Францирен Англие 2.000 нимĕç салтакне, тыткăна лекнĕскерсене, ăсатнă та ĕнтĕ. Тата темиçе пин çын тыткăна илни çинчен пĕлтереççĕ. Тыткăна лекнисем хушшинче пĕр нимĕç генералĕпе унăн штабĕ пур.

ФРАНЦИ ПАТРИОЧĔСЕМ СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Çар корреспонденчĕсем çапла пĕлтереççĕ: Франци партизанĕсем, пĕчĕк ушкăнсене пĕтĕçсе, тăшмана хирĕç çапăçаççĕ, вĕсем союзниксен çарĕсене активлă пулăшаççĕ. Союзниксен çарĕсем анса ларма пуçланă чухнех вĕсем нимĕçсене хирĕç çапăçăва кĕме хатĕр тăнă.

Французсем Гитлер оккупанчĕсене хирĕç тăрасси пĕтĕм Францийĕпе вăйланса пырать. Франци çĕршывĕн пур кĕтессисенчен те гитлеровецсене хирĕçле ĕçсем туни çинчен, нимĕçсемпе тытăçа-тытăçа илни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ.

Швейцари хаçачĕсем çырнă тăрăх, июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Франци патриочĕсен пысăк вăйĕсем, альпийски стрелоксем ертсе пынипе, Гренобль хулине хупăрласа илнĕ. Хальхи вăхăтра унта хаяр çапăçу пырать. Виши влаçĕсем пĕтĕм района вăрçă лару-тăрăвĕнче шутланать тесе пĕлтернĕ.

Çавăн пекех тата Францин ытти районĕсенче те халăх хумханма пуçлани, йĕркесĕрлĕхсем тухса кайни çинчен пĕлтереççĕ. «Сюисс» хаçат çапла çырать: чикĕри Бельгард чугун çул узелĕн районне партизансен отрячĕсемпе çапăçма нимĕçсем çартан подкрепленисем илсе пынă.

СОВЕТ СОЮЗĔН КАНАДĂРИ ПОСОЛĔ ЗАРУБИН ЮЛТАШ ХĂЙĔН ВЕРИТЕЛЬНĂЙ ГРАМОТИСЕНЕ ПАНĂ

ОТТАВА, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Канадăри посолĕ Зарубин юлташ паян Канадăн генерал-губернаторне хăйĕн верительнăй грамотисене, çавăн пекех тата хăй умĕн Канадăра совет посолĕ пулса ĕçленĕ Гусев юлташа каялла чĕнсе илни çинчен калакан грамотăсене те панă.

ÇĔНĔ ВĔРЕНӲ ÇУЛНЕ ХАТĔРЛЕНМЕ ТЫТĂНТĂМĂР

ОКТЯБРЬСКОЕ. Эпир, Асанкассинчи тулли мар вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем, вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлеме тытăнтăмăр. Хамăр вăйпа тата ачасен ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе 235 кубометр вутă касса хатĕрлерĕмĕр. Вăл шутран 180 кубометрне шкула турттарнă та ĕнтĕ.

Кунпа пĕрлех шкул çуртне йĕркелес ĕçе те тытăнтăмăр. Кăмакасене юсатпăр, классенчи стенасене шурататпăр, партăсене те хамăр вăйпах юсатпăр.

Вĕренӳре кирлĕ пулакан кĕнекесене сутăссине те аван йĕркеленĕ. Хальхи вăхăтра ачасем хушшинче 468 кĕнеке ытла сутнă.

В. СУРСКАЯ,
Шкул директорĕ.

Чăвашсен государство академи театрĕн Калининăри филиалĕ

Республикăри колхозсемпе районсенчи ĕçсыннисен культурăллă канăвне лайăхрах йĕркелес шутпа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăвашсен государство академи театрĕ çумĕнче филиал уçма йышăннă. Филиал (директорĕ Н. Кузьмин) хăйĕн ĕçне июлĕн 1-мĕшĕнче, Калининăра тытăнать.

Вырăс писателĕсен кĕнекисене чăвашла кăларни

Чăваш халăхне вырăс-совет писателĕсен Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă произведенисемпе паллаштарас шутпа, Чăвашгосиздат чылай кĕнекесене чăвашла куçарса пичетлесе пырать.

Ку таранччен Ф. Панферовăн «Хамăн куçпа» повеçĕ, Ванда Василевская çырнă «Пĕр пӳртре» ятлă калав, Константин Симоновăн «Вырăс çыннисем» ятлă пьеси, Н. Тихоновăн «Совет çыннин сăн-сăпачĕ», ятлă калавĕсем тата ыттисем те пичетленсе тухнă.

Халь Борис Горбатовăн «Парăнманнисем» (Непокоренные) повеçне куçарса производствăна панă. Кăçалхи план тăрăх тата Ванда Василевская çырнă «Асамат кĕперĕ» (Радуга) ятлă пысăк повесть пичетленсе тухмалла.

Совет Союзĕ тăрăх

СОВЕТ ЭСТРАДИН ПĔТĔМ СОЮЗРИ СМОТРĔ

Искусство ĕçĕсен комитечĕ июль уйăхĕнче Мускавра Пĕтĕм Союзри совет эстрадин çак вăрçă вăхăтĕнче тунă çитĕнĕвĕсене пăхса тухмалли смотр туса ирттерет. Смотр «Эрмитаж» ятлă эстрада театрĕнче пулса иртет. Унта Утесов, Шульженко, Райкин коллективĕсем, Грузи, Казахстан, Киргизи ансамблĕсем тата ыттисем те хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. (ТАСС).

120 КАНУ ÇУРЧĔПЕ САНАТОРИ

ВЦСПС-ăн çынсене сыватакан учрежденийĕсенче çуллахи сезон пуçланнă. Государствăн социальнăй страховани бюджечĕ тăрăх кăçал кану çурчĕсемпе санаторисене тытса тăма 228 миллион тенкĕ панă.

Кăçал профсоюзсен 120 кану çурчĕпе санаторийĕнчен кая мар ĕçлемелле. Вĕсем çĕршыври промышленность центрĕсем сывăхĕнче. Халăх хуçалăхĕн чи кирлĕ отраслĕсенче ĕçлекен темиçе çĕр пин рабочи вĕсенче лайăх канĕç тата сывалĕç. (ТАСС).

ОДЕССА ЮСАНАТЬ

Одессăра пурнăç хăвăрт йĕркене кĕрсе пырать.

Хулара 4 больница, ача çуратмалли 3 çурт, 17 поликлиника, 7 амбулатори, 14 ача консультацийĕ тата ытти медицина учрежденийĕсем те ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

75 вăтам тата пуçламĕш шкул уçăлнă. Государство университетĕнче тата 7 институтра вĕрентме тытăннă.

Хулара 5 театр ĕçлет; Шевченко ячĕпе тăракан культурăпа кану паркне уçма хатĕрленеççĕ.

Часах электростанцие хута яраççĕ тата трамвай çӳреме тытăнать. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăвашпотребсоюзăн кадрсен отделĕ Центросоюзăн бухгалтери ĕçне заочно вĕренмелли курсне илесси çинчен пĕлтерет.

Бухгалтери ĕçне заочно вĕрентекен курсра çак специальноçсене вĕрентекен отделенисем пур: сельпо бухгалтерĕсен отделенийĕ, районсенчи хатĕрлев конторисен бухгалтерĕсен отделенийĕ, райпотребсоюзсен главнăй бухгалтерĕсен отделенийĕ.

Курса 10 çултан çамрăк мар граждансене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене, илеççĕ. Шут ĕçĕнче çулталăкран кая мар ĕçленĕ çынсене сахалтарах пĕлсен те илме пултараççĕ.

Курсра вĕренекенсене вĕренмелли материалсене курс хăй ярса тăрать.

Курса вĕренме кĕмешкĕн Чăвашпотребсоюзăн кадрсен отделне заявленипе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: а) мĕн чухлĕ вĕреннине тата мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан справка; б) потребкооперации системинче ĕçлеменнисен тата хăйсен организацийĕн руководителĕ потребкооперации системине куçма ирĕк паракан хут.

Вĕренме кĕмелли условисене тата заявлени çырмалли бланксене Чăвашпотребсоюзăн кадрсен отделĕнче илме пулать.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Чувашпотребсоюз, отдел кадров.

Шупашкарти Горкомхозăн çулйĕр секторне çакăн пек работниксем кирлĕ: баланс тума пĕлекен бухгалтер тата счетовод-кассир.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары. ул. Карла Маркса. 4. II этаж.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторăн —0—23.

НТ 00180 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.